Иртнине хальхипе çыхăнтарать

Халăх тумĕ - пирĕн культурăн пысăк пайĕ. Ун хакне, пĕлтерĕшне, сумне лайăхрах ăнланас тесен, авалхи истори аваpне "путмалла". Халăх кун-çулне тепĕр хут аса илме, унпа пĕрлех чăваш тумĕн историйĕпе паллашма пире В. Николаевпа Г. Иванов-Орков тата В. Иванов хатĕрлесе кăларнă "Чăваш тумĕ. Аваллăхран паянлăха" кĕнеке (2002 çулта тухнă) пулăшĕ.

Халăх ӳнерĕн паллă тĕпчевçи А. Трофимов çапла палăртать: "Пирĕн тум çĕр ĕçчен еккипе тачă çыхăннă. Унăн несĕлĕ авалхи инди-иран культурисенче амаланать, хавалĕн кăкне вара Çурçĕр Иранпа Вăтам Азин кăнтăр тăрăхĕнчи авалхи çĕрĕçченсен (п. э. у. IV-III пинçуллăхсем) ăс-пурлăхĕпе ӳнерĕнче шырамалла". Çав таврари йăхсен çи-пуçĕ чăвашсен тумĕпе пĕр пекрех пулнă теççĕ. Çакна авалхи Согдианăн хĕртнĕ тăм кӳлеписем (1-мĕш ӳкерч.) çирĕплетеççĕ. Вĕсенче кĕскĕ тĕрри пек эрешсене тата шупăр, пĕркенчĕк, сурпан, хушпу евĕрлĕ çи-пуçа асăрхама пулать. Чăвашсен тата Вăтаçĕрпе Вăтам Ази халăхĕсен тум пĕрешкеллĕхĕ пире çывăхрах тапхăрсенче те сисĕнет.

(1-мĕш ӳкерчĕк).

Пăлхар сăвассем

Чăвашсен мăн аслашшĕсем, пăлхар-сăвассем, III-VIII ĕмĕрсенче Çурçĕр Кавказпа Азов тăрăхĕнче пурăннă. Вĕсен тумне çав таврашри халăхсем витĕм кӳнĕ. Ку, тĕслĕхрен, ĕлĕкхи шупăр ĕлкинче палăрать. Çӳхе сăрантан тата кĕççерен çĕленĕ çак вăрăм çанăллă çи-пуç - ăна **кантис** тенĕ - Вăтаçĕр Азире сарăлнă пулнă. Пирĕн эра умĕнхи VI-V ĕмĕрсенче Туллă Алтайра сумлă çынсем тăхăнса çӳренĕ. Çурçĕр Кавказра вара сăхмансемпе шупăрсене тăларан тата пиртен çĕлеме пуçланă, çавăнпа унăн тулаш сăнĕ те улшăннă. Ĕлĕкхи чăваш шупăрĕсем çак çи-пуçа аса илтереççĕ.

Чăвашсен тата хальхи Болгарин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи пăлхарсен тумĕсем хăйне евĕр çыхăннине тĕпчевçĕсем тахçанах асăрханă. Дунай тăрăхĕнчи авалхи пăлхарсем - чăвашсемпе çывăх хурăнташлă пулнă йăхсем - çӳллĕ конус евĕр, шĕвĕр вĕçлĕ калпаксемпе çӳренĕ, чĕркуççирен иртекен кĕпепе сăхман, йĕм тата кĕске атă тăхăннă.

Çурçĕр Кавказра юлнă "хура пăлхарсен" çи-пуçĕ те (вăрăм шупăр, сăран кушилкке (кошелек) çакнă пиçиххи) чăваш тумне аса илтерет. Кĕпесен кăкăр умĕнчи тăваткалĕсем чăвашсен кĕски евĕрлĕ.

Финн-угрсен йĕрĕ

Пăлхарсем çитичченех Вăтам Атăл тăрăхĕнче финн-угр йăхĕсем пурăннă. Вĕсен тĕрлĕ ремесла лайăх аталаннă, çавăнпа илемлĕ çи-пуçпа капăрсем тума майсем пулнă. Атăлçи тăрăхĕнчи авалхи йăхсем йĕтĕн е кантăр пиртен çĕленĕ çи-пуçпа, илемлĕ пуç хатĕрĕсемпе çӳренĕ. Вĕсем кĕмĕлтен, пăхăртан (медь), туйăртан (бронза), ылтăнран тунă çĕрĕсемпе сулăсем тăхăннă, хĕрлĕ е ылтăн тĕслĕ шăрçа, тенкĕллĕ алка, çум çаккипе ытти эрешсене çакнă.

Атăлçи Пăлхар тапхăрĕ

Чăваш халăхĕн тĕп паллисем Атăлçи Пăлхар тапхăрĕнчех уçăмланнă. Пăлхарсен пурин те пĕр пек тум пулман. Çар çыннисем, тӳре-шара, ал ăстисем, сутуçăсем, тĕн çыннисем, хресченсемпе хула çыннисем хăйне тивĕçлĕ тумтирпе çӳренĕ.

Пăлхарсем тĕп çи-пуçне - кĕпине - шурă пиртен çĕленĕ. Чылайăшĕн сыпăклă кĕпе пулнă. Тĕпчевçĕсен шучĕпе, чăваш кĕпин каярах йăлана кĕнĕ илемлĕ тытăмĕ, тĕрĕ-эрешĕ "Атăл çинче Аслă Пăлхар патшалăхĕ пуç пулнă" тапхăрта тымар янă.

Пăлхар хулисен ишĕлчĕкĕсене тĕпченĕ чух чăваш хĕрĕн тухйи евĕр пуç хатĕрĕсен пайĕсене тупнă. Кун пек калпаксем хальхи Удмуртин çурçĕр тăрăхĕнче пурăнакан пессерменсен (бесермяны) - вĕсем те пăлхарсен тăхăмĕсемех - сыхланса юлнă. Çапла тĕпчевçĕсем ытти пайсен пĕрпеклĕхне те тупса палăртнă. XIII ĕмĕр тĕлне Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ тĕреклĕ те вăйлă аталаннă çĕршыв пулнă. Анчах та XIII-XIV ĕмĕрсенче инкек çине синкек килнĕ. Чăвашсен мăн аслашшĕсем тутар-монголсен пусмăрлăхне лекнĕ. Пăлхар çĕрне тĕрлĕ эшкерсем тустарнă, вырăс çарĕсемпе кăнтăрти йăхсем киле-киле тапăннă. Пирĕн мăн асаттесен хулисемпе суту-илӳ çулĕсем пĕтсе пынă. Пăлхар чăвашсем çухату хыççăн çухату тӳснĕ. Культура пуянлăхĕ те майĕпен юхăннă.

XIV-XVI ĕмĕрсенче хальхи чăвашсен мăн аслашшĕсем ытти халăхран уйрăлса пурăннă. Атăлçи Пăлхар культурине упраса хăварасшăн тăрăшнă. Çухатăвĕ нумай пулнă, анчах сыхланса юлнă тумсем çав пуянлăхăн ытарайми илемĕпе чапне кăтартаççĕ.

(2-мĕш ӳкерчĕк).

Чăваш - кил çынни

"Пăлхар хыççăнхи" тапхăрта тата Хусан ханлăхĕ вăхăтĕнче халăх пурнăçĕ пĕтĕмпех улшăннă. Чăвашсен тавар-укçа хутшăнăвĕ пĕтнĕ. Тир-сăран тăвасси, çи-пуç çĕлесе эрешлесси, капăрлăх ăсталасси ял пурнăçĕнче çеç сыхланса юлнă. Хуласемпе çыхăннă ал ĕç ăсталăхĕ сӳннĕпе пĕрех пулнă. Сумлă çынсен чыслă тумĕ манăçса пĕтнĕ, хăш-пĕр тĕсĕ çеç хура халăха куçайнă. Ун йышши çи-пуç йăла-уяв тумĕ пулса тăнă.

Чĕрĕ юлнă пăлхар-чăвашсем вăрманлăхсенче пурнăç çавăрнă та хула культуринчен писнĕ. Халăх хăйĕн ăс-тăнĕпе пурăннă. XX ĕмĕрте те чăвашсем пирки çапла çырнă: "Чăваша кил çынни теме пулать: вăл ытти халăхсемпе хутшăнма юратмасть, шавлă выpăнсенчен аяккарах пурăнма тăрăшать..." Тимĕртен тĕрлĕ япала тăвасси пĕтсе пынă, эрешсенче вĕсене тĕрĕпе тата ытти хатĕрсемпе: хуртпуççипе (мелкая ракушка), шултра шăрçапа, вĕт шăрçапа, шараç-хăюпа (тесьма) улăштарнă.

(Малалли пулать).

С. ФИЛИППОВА хатĕрленĕ.

Иртнине хальхипе çыхăнтарать

(Малалли. Пуçламăшĕ 49№).

Синкерлĕ саманара чăваш халăхĕ пин-пин çул хушши пухăннă ăс-хакăл мулне - çут çанталăк пĕлĕвне, ĕненĕвне, йăли-йĕркипе чĕлхине - упраса хăварма тăрăшнă.

Çак пуянлăх вара тум çинчи эреш-тĕрĕ пулса тата ытти майпа ламран лама куçса пынă.

Арçынсене вăрçăсене хутшăнма тивнĕ, ытларах çĕр ĕçĕпе ĕçленĕ. Çавăнпа вĕсен пурнăçĕ йывăр та кĕске пулнă. Ăс-пурлăха аталантарма хĕрарăма шăпа пӳрнĕ. Халăх ĕçченлĕхпе ăсталăха, тăрăшулăхпа пултарулăха сума сунă. Тĕрĕ ăстисем пĕр пĕчĕк пир татăкĕнче пĕтĕм Çут тĕнчене ытарлăн сăнама пултарнă.

Анчах тахăш вăхăтра çыхăну татăлнă - чăвашсем тĕрĕ чĕлхине ăнланма пăрахнă. Авалхи çырулăха халĕ халăх сăмахлăхĕ урлă çеç ăнланма пултаратпăр.

Халăх искусствин тĕп тĕсĕсем

Аталану çулĕпе пырайман пулсан та, Пăлхар хыççăнхи тапхăрта чăваш халăхĕ чăмăртанса йĕркеленнĕ, этнографи ушкăнĕсен уйрăмлăхĕсем палăрнă, халăх искусствин тĕп тĕсĕсем никĕсленнĕ. Тĕпчевçĕсен шучĕпе, арçынпа хĕрарăм çи-пуçĕ ун чухне пĕрешкелтерех пулнă. Хĕрсемпе арăмсем пуç тумне вак кĕмĕлпе, хурт пуççипе, шăрçапа, ылтăн çиппе илемлетнĕ.

XVII ĕмĕрти тум финн-угрсемпе çыхăннă. Тĕслĕхрен, хĕрарăмсем çуха кассине тăрăхла çавра çеçтенкĕн тăха йĕппипе хытарнă. Каярах виç кĕтеслĕ çеçтенкĕ йăлана кĕнĕ, ун тăрринче пĕчĕк ункă пулнă.

Туйăртан (бронза) та кĕмĕлтен тунă тĕрлĕ йышши капăрлăха - хăлха çаккине, çĕрре, сулла - ахăртнех, хулари ал ăстисенчен туяннă-тăр. Тен, ку ĕçе пултаракан ăстасем чăваш ялĕсенче те сыхланса юлнă. Анчах кун евĕр капăрлăха майĕпен тĕрĕ эрешĕ хĕссе кăларнă. Капăр эреш ăсталама вак кĕмĕлпе хурт пуççи кайнă. Тĕрлĕ тĕслĕ кĕленчерен тунă вĕт шăрçапа та усă курнă. Арçын тумĕ хăй тытăмĕпе тата капăрлăхĕпе ансат пулнă. Ун йышне шурă кĕпепе йĕмсĕр пуçне шурă е сарă тĕслĕ тăла шупăр кĕнĕ. Вăл вăхăтри тăхасене (пряжки на ремне) тупни ун чухне чĕн пиçиххисем пулнине çирĕплетет. Ун çумне вут çапакан тимĕр (сулу, чакма) çакнă. Арçынсем хăйраса çивĕчлетнĕ пĕр енлĕ çĕçĕ чиксе çӳренĕ. Аврисене эрешсемпе илемлетнĕ. Ун евĕр çĕçĕсене авалхи масарсенче çын пуçĕ тĕлĕнче тупнă. Атă çĕтĕкĕсем тата тимĕр такансем (подкова) атă-пушмака ун чухне кĕççерен, пушăтран тата сăрантан (выделанная кожа) тунине пĕлтереççĕ.

XVI-XVIII ĕмĕрсенче чăваш халăхĕн виçĕ этнографи ушкăнĕ йĕркеленме пуçланă. Вĕсен çи-пуçĕнче авалхи пăлхар тата финн-угр витĕмĕ палăрнă.

Тавар-укçа хутшăнăвĕсем сӳнсен те, ал ăсталăхĕ - çав шутра "кĕмĕл ĕçĕ" - манăçман. Анчах XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче патша влаçĕ чăвашсене тимĕрпе ĕçлеме чарни ку ăсталăха путлантарнă. Çапах та ăстаçăсем XX ĕмĕрчченех йĕс кĕпçесем (латунные трубки), çутанккасем (бляхи), пуç тумĕпе ум çаккисем валли шăкăр-макăр хатĕрленĕ.

"Çĕнĕ" этнос "çуралнă"

Хăрăнма пуçланă пăлхар кăкĕнчен XV-XVIII ĕмĕрсенче хăйне евĕр ăс-пурлăхлă, культурăллă "çĕнĕ" этнос - чăвашсем - "çуралнă". XVII ĕмĕрте халăх тумĕн пĕрлĕхĕ йĕркеленсе çитнĕ. 1666 çулхи çырулăх палăкĕсенче Чĕмпĕр уесĕнчи анатри чăвашсен шараç (тесьма) тытнă чаплă кĕписене, кĕмĕл тенкĕллĕ теветпе хушпăвĕсене, кĕмĕл чĕнтĕрĕсене, хăлха çаккисене, пурçăн тĕрĕллĕ пиçиххипе масмакĕсене асăннă.

XVIII ĕмĕре чăваш тумĕпе тĕрĕ эрешĕ вăйлă аталаннă вăхăт тесе хаклаççĕ. Халăх тумĕ искусство шайне çĕкленнĕ. Музейсенче упранса юлнă çав тапхăрти тум тата тĕрĕ тĕслĕхĕсем авалхи ăстасен илем туйăмĕпе пултарулăхне кăтартаççĕ.

Çак вăхăтра чăвашсем пурăннă вырăн сарăлсах пынă. Вĕсем ун чухне хăйсен çи-пуçне çĕнĕлĕхсем кĕртмен-ха, анчах ытти халăх культурипе чылай паллашнă.

Тум валли мĕн кирлине (çипне, пирне, тирне, хăюхуртине, йĕсми-шараçне) XVIII ĕмĕрĕн малтанхи çурринче ытларах килте хатĕрленĕ. Тĕрĕсем çут çанталăк панă сăрăсемпе çуралнă. Уяв тумне сăн кĕртме, капăрлăх ăсталама пурçăн çипсене, тĕрлĕ шăкăр-макăра пасарта туяннă. Майĕпен ум çаккисене, пуç тумне Раççейĕн кĕмĕл укçипе илемлетме пуçланă. Пуянрах пурăнакансем "кăвак" тата "нимĕçле" пуставсем, "киттай" тата хăмач йышши пир-авăр туянма пуçланă, анчах вĕсене çиелтен тăхăнмалли чаплă тумтир çĕлеме кăна тăкаклана.

XVIII ĕмĕр тĕлне уяв тумĕсем чаплăран та чаплă ӳнер хайлавĕ шайне çĕкленнĕ.

(Малалли пулать).

С. ФИЛИППОВА хатĕрленĕ.

Сăн ӳкерчĕксенче: Пăлхар тапхăрĕнчи тумсем; XVII ĕмĕрти хĕрарăм кĕпипе хĕр тумĕ.

Иртнине хальхипе çыхăнтарать

(Малалли. Пуçламăшĕ 49-50№№).

Çут çанталăкпа çыхăнура тăнă

Пирĕн халăх пурнăçĕ çут çанталăкпа тачă çыхăнни авалхи тумсенче уççăн палăрать. Çи-пуçа кантăрпа (конопля) йĕтĕн (лен) пиртен çĕленĕ. Тĕрлеме усă куракан çипсене ӳсен-тăран тымарĕсемпе, çулçисемпе, çеçки-чечекĕсемпе сăрланă. Выльăх-чĕрлĕх тирĕпе çăмĕнчен тумтир ăсталанă. Тĕрĕ-эрешсене те çут тĕнчене хăйсем мĕнле ăнлантарнипе çыхăнтарнă. Кĕпе хул пуççийĕсем çине тӳпепе тĕнче тĕнĕлĕ ӳкернĕ. Çуха кассин сылтăм енчи эрешĕ вута пĕлтернĕ. Сулахай енчи авалхи чӳк вырăнне палăртнă.

Кĕпе

Халăх тумĕн тĕп пайĕ вăл - кĕпе. Ăна тĕрлĕ йышши капăрлăхпа, тĕрĕпе илемлетнĕ. Пилĕке пиçиххи çыхнă, чĕрçитти тата сарăпа яркăч çакнă. Капăрсен йышĕнче тенкĕ-нухрат, тĕрлĕ шăрçа тĕп вырăн йышăннă.

Кĕпен пĕлтерĕшĕ те пысăк. Малтан вăл "усал-тĕселрен", начар çанталăкран сыхлакан хӳтлĕх шутланнă. Каярах çын хăш ушкăнран пулнине, арлăхне, ӳсĕмне, мăшăрлăхне палăртнă. Кĕпене тӳрĕ те вырнаçуллă касса çĕленĕ. Умĕпе хыçне 35-38 см сарлакăш пĕр ан пиртен ăсталанă - хул пуççи тĕлĕнче çурмалла хутлатнă. Айккисене тепрер ан хушнă. Аркисене сарма хăйăсем çĕленĕ. Вăрăм çанăсене кĕпе пĕвĕ çумне тӳрĕ кĕтеслĕн лартнă. Пĕтĕмĕшле илсен, кĕпе çын кĕлеткине çат тытнă, вăрăмах пулман (110-120 см тăршшĕ). Çуха шăтăкне çавăрса е тăваткаллатса каснă. Хĕррисене хĕрлĕ хăмăчпа çавăрнă, унпа юнашар вĕтĕ тĕрĕ тĕрлесе антарнă. Хĕрарăм кĕпин умне çаврашка эрешсем е хĕрлĕ "тайлăк тăваткалсене" çĕленĕ. Кĕпен чи илемлĕ те сумлă вырăнĕ çавă шутланнă.

Хĕр кĕписем

Вĕсене урăхларах сăн кĕртнĕ. Кĕпе умне сылтăм енчен е варринчен касса антарнă. Çуха кассин икĕ айккине кукрашкасем тата Ама йывăç евĕрлĕ шултра тĕрĕсем лартнă.

Арçын кĕпин

çуха кассине сылтăм енче тунă (чĕре енче касман). Вырăс кĕпинчен çакăнпа уйрăлса тăнă (вĕсем сулахайра каснă). Уявра тăхăнмаллисем илемлĕ, эрешлĕ пулнипе палăрнă.

Шурă тĕсе сумлани

Чăвашсен кулленхи пурнăçĕнче шурă тĕс пысăк вырăн йышăннă. Турă шурă тĕсе кăмăллать, тенĕ. Çу пуçламăшĕнче Çинçе вăхăтĕнче ял шăпланнă - пĕтĕленнĕ çĕре чавма, шавлама юраман. Шурă çи-пуç тăхăннă хресченсем пĕрле пухăнса урама тухнă. Турă хĕрлĕпе кăвак пир-авăра юратмасть: çумăр çутармасть тенĕ. Ял хушшинче ку евĕр тумпа çӳрекене асăрхасан шывпа сапнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çынсем шурă çи-пуçран писсе пынă - çакна ватăсем "усал астарни" тенĕ.

Эрешсемпе тĕрĕсем

Кĕпесене, шупăрсене (çиелтен тăхăнмалли çуллахи çăмăл тум) тата ыттине те пĕрчĕ шутласа тĕрленĕ эрешпе илемлетнĕ. Малтан тĕрре хура çиппе йĕрлесе тухнă, унтан хĕрлĕ тĕслĕ çинçе пурçăн çиппе вĕттĕн тĕрленĕ. Эрешĕн пысăк мар пайĕсене çутă симĕс, улăм тĕслĕ сарă, кăвак çипсемпе сăн кĕртнĕ.

Геометри кукрашкисене, çеçке таврашне тата этем, чĕр чун, вĕçен кайăк кĕлеткисене тĕрленĕ. Кĕскĕ текен эреше хĕрарăм кĕпи умне кăкăр ик енне тĕрленĕ. Ун авалхи пĕлтерĕшне хĕвелпе çыхăнтараççĕ.

Капăр япаласем

Çип çине тирнĕ шăрçасемпе хурт пуççисем чи ансат капăрсем шутланнă. Капăрлăха ытларах вĕтĕ тата шултра шăрçана, тенкĕсене тата ытти шăкăр-макăра сăран, пир, хулăн тăла çине çĕлесе тунă. Пĕве çитекен хĕр ачасем пĕрлехи уявсемпе улахсене çӳреме пултарнă. Вĕсен тенкĕллĕ мăй çыххисем, пиçиххи, мăйлă çум çакки, "хӳресем", çивĕт эрешĕ пулнă. Кĕмĕлпе тата вĕтĕ шăрçапа илемлетнĕ тумсене уявсенче кăна тăхăннă. Çавăнпа вĕсене ытти тумтиртен илемлĕрех тума тăрăшнă. Ăстаçăсем тум капăрлатнă чухне ăна хăш вăхăтра тата кам тăхăнса çӳремеллине яланах асра тытнă. Çакна кура хĕр упраç япалисем çăмăлрах та çепĕçрех.

(Малалли пулать).

С. ФИЛИППОВА хатĕрленĕ.

Сăн ӳкерчĕксенче: XIX ĕмĕрти хĕрарăмсен уяв кĕпи; Анатри чăвашсен XIX ĕмĕрти хĕр тумĕ.

Иртнине хальхипе çыхăнтарать

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 49-51№№).

Тĕветпе шӳлкеме

Кĕмĕлпе те вĕтĕ шăрçапа илемлетсе тунă япаласем хушшинче хĕрарăмсемпе хĕрсен теветне палăртмалла. Ăна сулахай хул пуççи урлă çакса çӳренĕ. Хĕрарăмсем теветпе туйсене тухнă. Хĕрсем - çурхи тата кĕрхи уявсене, вăйăсене. Çавăн пек уявсенчен пĕри - Хĕр сăри. Ăна хăмлапа çĕн сăра ячĕпе ирттернĕ. Ун чух хĕрсен пурин те тевет çакмалла пулнă.Ытти капăрпа пĕр танах хĕрсен кăкăр умне çакакан шӳлкемене те асра тытмалла. Хăш-пĕр çĕрте ăна сурпан ярапи е ама текенсем те пур. Хĕр шӳлкеминче, хĕрарăмăннипе танлаштарсан, сурпан çыхнă чух усă куракан виçкĕтеслĕх çук. Унсăр пуçне, вăл пĕр хутлă кăна. Тури чăваш хĕрĕсен шӳлкеми пĕр пек икĕ пайран тăракан тăваткĕтеслĕх. Анатри тата анат енчи хĕрсен вăл çурма çаврашка е тăватă кĕтеслĕ.



Шӳлкеме.

Хĕрарăм капăрĕсем

Ĕлĕк тури чăвашсен хĕрарăмĕсем кăна ама çакнă. XIX ĕмĕр вĕçĕпе XX ĕмĕр пуçламăшĕнче хĕрсем те унпа çӳреме пуçланă. Вăл икĕ тĕрлĕ пулать: пуç хыçĕпе тата пуç хыçĕсĕр. Пĕр йышши амасене икĕ рет, теприсене виçĕ рет илемлетнĕ.

Хушпу.

Хĕр тухйипе арăм хушпăвĕ

Тухья вăл - пиртен çĕленĕ, шăрçапа, тенкĕсемпе сăн кĕртнĕ пысăках мар калпак. Вĕсем тĕрлĕ пулнă. Анат енчисен çаврака, пуç тӳпинче вĕт шăрçаран тунă Хĕвел паллиллĕ. Анатрисен тухйин тĕрлĕ тĕслĕ вĕт шăрçапа çавăрса илемлетнĕ 4-6 см çӳллĕш тăрнашка пур. Тухьяна янах айĕнче сăран е пир антăрлăхпа (завязка) е тенкĕллĕ пӳшкĕнпе (ремешок) çаклатнă.

Тухьясем.

Хушпусем темиçе тĕрлĕ пулнă, анчах пурин те тенĕ пекех тăрри уçă, çурăм хыçнелле - пилĕк таран -хӳре анать.

Мăй, кăкăр умĕ, хул пуççисем, пилĕк - çаксене пурне те çирĕп йĕркепе вырнаçтарнă капăрсем “хӳтĕленĕ”, илемлетсе тăнă.

Тухьяпа хушпăва пĕр йышши япаласемпе, пĕрешкел меслетпе тунă. Иккĕшĕн те чи илемли - пуç тавра çавăрнă шăрçа тĕрри, ытларах вăл тайлăк тăваткалсенчен тăнă. Хушпу çинче шăрçа чĕнтĕрĕ çӳлти хĕррипе пырать, тухья çинче - варрипе. Хушпу е тухья илемлетнĕ чух ăстаçăсем кĕмĕл тенкĕсене вĕсен пысăкăшне кура мар, янăравлăхне шута илсе вырнаçтарнă. Пуç тӳпинелле тенкĕсене пĕр-пĕрин çумне тачă çĕклесе хунă, хĕрринчисене ирĕклĕн вырнаçтарнă. Ташланă чух е вăйă картинче утнă чух кĕмĕл тенкĕсем илемлĕн шăнкăртатнă.

Мăй çыххи.

Тури чăваш хĕрарăмĕсен пуçа сыракан сурпанĕсен тĕрри икĕ енлĕ. Ӳкерчĕксем хутлă-хутлă сийлĕ вырнаçнă. Сурпан вĕçне çӳçепе, тĕрлĕ тĕслĕ шăрçасемпе илемлетнĕ.

XIX тата XX ĕмĕрсен чиккинчи тапхăрта чăвашсен пурнăçĕ улшăннă. Çавна май капăр тумăн йăла-йĕркери пĕлтерĕшĕ майĕпен чакса пынă, пĕрчĕллĕ тĕрĕ ăсталăхĕ манăça тухнă. Халăх тумĕ çынна Çут çанталăкпа, Тĕнче уçлăхĕпе çыхăнтармасть ĕнтĕ, анчах унăн ытарайми чаплă ӳнер пахалăхĕ иксĕлсе пĕтмен-ха.

С. ФИЛИППОВА хатĕрленĕ.